# Кашни йĕрке - кĕвĕ

**/ВАÇЛЕЙ ДАВЫДОВ-АНАТРИН ПОЭЗИЙĔ - МУЗЫКĂРА/**

Д.Б.Кабалевский композитор "Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта музыкăна вĕрентмелли тĕп принципсемпе меслетсем" ĕçĕнче çапла каланă: "Нимĕнле произведени те ачасен умĕнчен пĕр йĕрсĕр иртмелле мар. Вăл вĕсен ăнланăвне, чĕрине хускатма тивĕç... Шкулти музыка пĕлтерĕшĕ искусство чиккисенчен тухать. Литературăпа сăнар искусстви пекех, вăл çамрăк ăрăва ырă шухăш-кăмăллă ӳстерес, пĕлӳ парас ĕçе пула музыка ăс-тăн тĕнчине йĕркелемелли ытарми хăватлă вăй пулса тăрать".

Шкулти музыка учителĕ фортепиано, аккордеон е баян калать, хор дирижерĕн техникине пĕлет, юрăç ăсталăхне те туптанă. Музыка историйĕпе теорине тишкернĕ. Нотăсем /юрă клавирĕ/ тăрăх е сасăсемпех вăл е ку кĕвве пĕр тональноçрен тепĕр тональноçе куçарма ăсталаннă, аккомпанементне те шыраса тупма хăнăхнă. Анчах та музыка учителĕн профессийĕшĕн хăйĕн предметне пĕлни кăна çителĕксĕр. Вăл музыкăна чĕрĕ искусствăна юратнă пек юратма тивĕç. Музыка ăна савăнăç кӳрсе тăма, хумханса курнăçма, хăй юратнине ачасем патне çитерме, вĕсенче ырă туйăм чĕртме пулăшмалла. Музыка учителĕн композиторпа поэт ĕçĕсенчи сыхăнусемпе питĕ хытă интересленсе ачасен чунĕсене кăсăклантармалли майсем шырамалла.

"Кирек мĕнле ĕç те, çыннăн чи çӳлти пусăмра тăракан кăмăл тата ăс-тăн туртăмне тивĕçтерет пулсан, искусство пулса тăрать",- тенĕ К.Д.Ушинский. Педагогикăна искусство шайĕнче хаклама сĕннĕ пире аслă вĕрентекенĕмĕр. Учитель ятарлă наука çине мар, "воспитани науки" çине таяннине палăртнă. Çак сăмахсен пĕлтерĕшне искусствăна вĕрентесси çинчен хускатнă май тата та витĕмлĕрех туятăп.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти I - IV классем валли хатĕрленĕ "Пуçламăш шкул музыка программине"тăхар-ха.

Паллă композиторсен юрри-кĕввисене юрлама, итлеме, тĕрлĕ ача-пăча инструменчĕсем каласа юрлама палăртнă произведенисем сахал мар кунта. Ку хайлавсем чăваш поэчĕсен сăввисене пула кун курнă та ĕнтĕ. Чăваш халăх поэчĕн Ваçлей Давыдов-Анатрин сăввисемпе çырнă юрăсем вара кашни класрах тĕл пулаççĕ. Музыка учительне поэтăн ĕçĕ-хĕлĕпе анлăрах паллашма, уроксенче, лекци-концертсенче тата ытти чухне усă курма хамăр асăрханă тата палăртнă сĕнӳсемпе паллаштаратпăр.

* * *

Пуринчен ытларах вăл чăваш халăх юррисене кăмăллать. Иртен пуçласа каçченех итлеме хатĕр. Хваттерĕнчи ĕç сĕтелĕпе юнашар çакăнса тăракан тăмрине ĕнерме пачах та кирлĕ мар, поэт ăна алран ямасть иккен. Чăваш юррисене вăл мĕн çамрăкранах пухса пырать. Унпа пĕрле пулсассăн, вăл сана юрлаттаратех, хăй те пĕрле юрлать. Ĕлĕкхипе хальхи халăх юррисене темĕн чухлех пĕлет: "Алран-кайми аки-сухи", "Сĕрен", "Ăçта каян, чĕкеç", "Чĕнтĕрлĕ кĕпер", "Начар лаша кӳлсе тухсан"... Халăх юррисен жанрлăхне çирĕп тытса пырать, юрланă чухне пĕртте пăсмасть. Итленĕ май тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн, поэт чылайăшне халăхра сарăлман сăмахсемпе юрлать. Халăх юррисене поэт хăйĕн мăшăрĕпе, Мария Максимовнăпа тата пĕччен те ăста юрлать, вĕсене чăваш радио фонотеки валли çырса хунă.

В.Давыдов-Анатрин творчествăри ĕçĕ-хĕлне чылай сыравçă тишкерчĕ ĕнтĕ. Вениамин Тимаковпа Гурий Чаржов, Сергей Юшков, республикăри хаçат-журналсенче те поэтăн пурнăçĕпе творчествине çутатсах тăчĕç. Çак тишкерӳре В.Давыдов-Анатри творчествин музыкăри пĕлтерĕшĕпе, поэт чун-чĕринчи юрă-кĕвĕ хĕлхемĕпе, ырă туйăм-кăмăлĕпе сывăхрах паллашăпăр.

Патăръел районĕнче, Аслă Арапуçĕнче çуралса çунат сарнă поэтăмăр халăх юррипе тăванланнă. Çакна сăвăçăн шăрçаланса пыракан кашни сăвă йĕркинче асăрхатăн:

Эп çуралнă чăваш ялĕнче
Хĕллехи хаяр кун сиввинче,
Юратса хăй чунне-ачине
Кипкепе пиеленĕ анне.

Давыдов-Анатри сăввисенче хăй çинчен акă мĕнле хыпарлать:

Ян-ян каять чăваш юрри,
Ăна итлеп каçса кайса.

Чăн та, поэт-юрăçă пулмах çуралнă тейĕн В.Давыдов-Анатри. 1936 çултанпа вăл чăваш композиторĕсемпе хывнă вуншар юрă республикăри пултарулăх коллективĕсенче, профессиллĕ юрăçсен репертуарĕнче, каярахпа халăхра анлăн сарăлчĕ.

Поэтăн чи паллă жанрĕ - юрă. Тăван кĕтесе тата унăн çыннисене поэт чунтан юратать, мухтать. Тăван кĕтеспе тĕл пулнă самантa сăнлакан йĕркесене илер-ха. Вăл унта çапла калать:

Асран кайми тăван кĕтес,
Сана мĕнле парне сĕнес?

Малалла поэтăн асаилĕвĕ, савăнăçлă ачалăха аса илтерекен сăмахсем янăраççĕ:

Умра Пăла сиксе вылять,
Сĕвенелле юхать, васкать...
...Епле манăн, ав, леш малти
Хырай ĕшни, Сăрнай кати.
Çулла пулсан, çара уран
Эпир унта мĕн чул чупман.
Мĕн çук ĕлккен Çăкасарта,
Ватти-вĕтти каять унта,
Хура çырла, кĕтмел, палан, -
Чĕрес тулать çакки таран...

Поэт тăван тавралăха парне кӳресшĕн, çуратнăшăн, çĕршывшăн усăллă çын пулма ӳстернĕшĕн тав тăвасшăн. Мĕнле парне-ши ку? Акă вăл:

Хисеплесе, чунтан савса
Парас сана юр юрласа...

Поэтăн малтанхи сăввисенчех халăхăн юррисен кĕввийĕ илтĕнет. 1942 çулта çырнă "Çĕршывăмăр анне" сăвăра çакна аван туятпăр. Вырăс былинисен тытăмĕ сисĕнет кунта:

Вăхăтсем хăрущ, эй, атте-анне,
Хаяр тăшмансем тăсрĕç сăннине.
Маттур каччăсем, хастар сар-хĕрсем,
Тухар çапăçма пурте пĕрлешсе.

В.Давыдов-Анатрин сăввисем композиторсене тахçанах илĕртеççĕ - 500 ытла юрă хыврĕç поэт сăмахĕсемпе. Вĕсем хушшинче пĕччен, иккĕн, ансамбльпе тата хорпа юрлама çырнă произведенисем пур. Уйрăмах композиторсене унăн Тăван çĕршыв, мир çинчен çырнă сăввисем килĕшеççĕ... Ку сăвăсенче поэт халăх творчествинчи чи лайăх традицисене тытса пырать. Ĕçри паттăрсене мухтаса юрлать. Çакна халăхра анлă сарăлнă юрăсенче лайăх туятпăр: "Мирпе туслăх юрри", "Çĕршывăм анне", "Чечекленет çĕршывăм", "Çĕшыв илемĕ", "Кашмаш каччи", "Каçхи илем" тата ытти те. Ф.Лукин /1913-1994/ композиторпа гимн евĕр янăракан тата шкул юррисем нумай хыврĕç. Халăхра сарăлнă юрăсем: "Пирĕн мухтавлă хĕрсем", "Çĕр-планета чĕнет", шкул юррисем: "Ӳссен эсĕ кам пулан?", "Кăвакал", "Çуркунне", "Тракторпа", "Кук-кук" тата ыттисем те ача-пăча коллективĕсен репертуарĕнче.

Пĕр вăхăтрах В.Давыдов-Анатрин тепĕр енĕ те паллă вырăнта. Тăван тавралăх, çут çанталăк ыррийĕ çĕклет ăна:

Хуллен шавлать чăваш вăрманĕ,
Куçа илместпĕр ун çинчен...

Çак пархатарлăх поэт творчествинче темиçе енлĕ туртăма вăратать. Тавралăха сăнланă май çамрăклăха, юратăва, тăвансене аса илтерет. Çаксем пурте этем пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăннине палăртать поэтăмăр. Юрă хывма çырнă ку сăвăсене, сăввине йĕркеленĕ чухне поэт ĕнерленĕ, пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмесĕр ĕçленĕ. Мĕнле композитор иленмĕ çак сăвăсене? "Пирĕн хĕрсем", "Мухтав сире, çĕр ăстисем", "Хастарлăх юрри", "Савнă тусăма" /кĕвви Ф.Лукинăн/, "Тăвансемсĕр, тав сире" /халăх кĕввине А.Токарев илемлетнĕ/, "Кала, тусăм, чăннине" /кĕвви Г.Хирбюн/, "Тальянка", "Хут купăса тытсассăн" /кĕвви Г.Лебедевăн/, /"Пире тăван кĕтсе тăрать", "Мĕн калам-ши сире, тăвансем" /кĕвви Ю.Кудаковăн/, "Кĕреке юрри" /кĕвви Н.Эривановăн/, "Туслăх юрри" /кĕвви Т.Фандеевăн/, "Шупашкар çутисем" - халăхăн юратнă юррисем. Мĕншĕн-ха çак юрăсем халăхра анлă сарăлнă? Поэт-юрăçă вĕсене чăннипех кĕвĕлеме çăмăл, янăравлă, усă тата çепĕç сăмахсемпе çырнă. Вĕсенче Василий Иванович Давыдов-Анатри чăваш музыкинчи юрă стильне çирĕплетме йĕрке тăвать.

Давыдов-Анатрин поэзири музыкăллă

ăнкарăвĕн çĕнĕ тапхăрĕ аллăмĕш çулсен вĕçĕнче тата утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче аталанать. Ăна поэтăн сăввисем валли композиторсем çĕнĕрен те çĕнĕ кĕвĕсем хывнипе çеç мар, поэт ку хушăра пуç çĕклемесĕр ĕçленипе туяппăр. Ку таранччен тупганнă ăсталăхпа тарăн шухăшлă темăсене, çĕнĕ сăнарсене творчествăри хавхаланупа уçса парать поэтăмăр.

В.Давыдов-Анатрин чи пысăк калăпăшлă ĕçĕ - "Чеменпе Мерчен" поэма. Аслă Отечественнăй вăрçăччен çырма пуçланă вăл ăна. Нумай хутчен тӳрлетнĕ, якатнă: халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе илемлетнĕ поэт хăйĕн поэмине. Çапла туни произведени шухăшĕпе сăнарсене чылай вăйлатать. Чеменпе Мерчен - 1917 çулхи революцийченхи çĕршер чăваш каччипе хĕрĕн сăнарĕсенчен пĕрисем. Пуласлăхшăн, пĕр-пĕрне шанчăклă юратса пур йывăрлăхсене те çĕнтересшĕн кĕрешекенсене кăтартнă ку произведенире.

**В.Давыдов-Анатрин пурнăçĕпе творчествинче юрă-кĕвĕ пысăк вырăн йышăнать терĕмĕр. Поэт ăна тарăн тата питĕ çивĕч туять. Çакă унăн поэзине чылай пуянлатать. Ача чухнехи пурнăçĕнче те халăхри юрă-кĕвве аса илмелли темĕн чухлех. Çамрăксем вăййăра е улахсенче юрлани, ял ĕçченĕсен уявĕнче, ваттисем ĕçкĕ-çикĕре юрлани-ташлани халĕ те поэтăн куçĕ умĕнчех иккен, вăл вĕсене çырсах пынă. Уйрăмах халăхăн тĕрлĕ жанрлă юррисем /ĕç, вăйă, хăна, салтак, йăла тата ыт.те/ поэт творчествинче анлă вырăн йышăнаççĕ. Ача чухне ăна ытларах ялти фольклор интереслентернĕ. Вун пиллĕкрех çамрăк сăвăç юрăсен сăмахĕсене пуçтарать, çырса илет, якатать. "Чеменпе Мерчен" поэмăра ытарлă сăмахсем - танлаштарусем çителĕклех. Вĕсенчен пĕринче:** Мерчене пуянсем вăрласан, хурăнсем хурланса макăраççĕ. Тепринче: Чеменпе Мерчен каллех пĕрле пулсан, çут хĕвел кулса, ялкăшса хăпарать.

Халăх поэзийĕпе, сăмахлăхĕпе усă курни поэтăн произведенине нумай вăйлатать. Ку çеç те мар-ха. Поэт халăх поэзине юрататъ тесе кăна каласшăн мар эпир, вăл ăна упрама, ăруран ăрăва тытса пыма чĕнет.

Чемен Мерчене юрататъ. Юратнă хĕрĕпе хавхаланнă шухăш—кăмăла туй такмакĕсенче аван уйăратпăр:

Сад пахчине ма кĕрес
Тутлă улма çимесен?
Качча пулса ма ӳсес
Чипер хĕре илмесен?
Урам урлă каçнă чух
Тантăшăма тĕл пултăм,
Аçа-çиçĕм çиçнĕ чух,
Мерчен, сана эп куртăм.

Федор Семенович Васильев композитор ку поэмăпа опера çырса В.Давыдов-Анатрин лирикине аслă çул пачĕ.

-Тăван çĕршыва, тăван халăха юратнă туйăм манăн пĕтĕмпех творчествăра, - тет Василий Иванович. Унăн тарăн шухăшлă лирикăллă сăнарсене /сăмахран, çамрăклăхпа юратăва/ уйăрас, тӳррĕн палăртман шухăшсене ăнланса юрă-кĕвĕре кăтартас ăсталăхĕ композиторсенчен те пысăк туйăм ыйтать.

Ку енĕпе композиторсенчен Герман Степанович Лебедев чи ăнăçлăрах ĕçлекеннисенчен пĕри тесен те йăнăш пулмĕ /1913-1980/. Вăл поэтăн шухăш-кăмăлне, сăввисен тавра курăмне чылай илем кӳчĕ. Аса илер-ха Г.Лебедев ятарласа В.Давыдов-Анатри сăмахĕсемпе çырнă "Акатуй" юрă-ташă сюитине. Ăна чăваш юрăпа ташă ансамблĕн репертуарне кĕртнĕ. Г. Лебедевăн поэт сăмахĕсемпе кĕвĕленĕ "Тальянка", "Сад янăрать сар кайăк сассипе", "Хут купăса тытсассăн" юрăсенче те чăваш ялĕсенчен "ăсса" илнĕ поэзи сăнарĕсем хăйсен конкретлăхне упраççĕ. Кĕввипе сăмахĕсен пĕтĕмĕшле вăйне пула поэтпа композитор ĕçĕсем Тăван çĕршывăн чăн-чăн символĕ таранах çĕкленеççĕ.

В.Давыдов-Анатри çамрăк ачасем валли те тăтăш çырать. Тăрăшса вĕренме, тăван çĕршыва юратма, ӳссен ăслă çын пулма вĕрентет поэт хăйĕн сăввисенче çамрăк тусĕсене:

Юрă юхтăр таврана...
Сĕрĕм-шывăм, тав сана!
Эс хĕвеллĕн ялкăшан,
Пире савса ăшăтан,
Пире савса ӳстерен,
Вăй-хал, телей пехиллен.

Унăн ача-пăча валли çырнă сăввисене пирĕн композиторсем нумайăшне юрра хывреç... Ку жанрта та поэтăн пурнăçĕпе творчестви çутă та тарăн. "Юратнă анне" /кĕвви Ф.Лукинăн/, "Лартар симĕс йывăçсем" /кĕвви Г.Лебедевăн/, "Пĕчĕк сар хĕр Марине" /кĕвви В.Ходяшевăн/, "Çуркунне" /кĕвви А.Токаревăн/, "Пирĕн хаклă хăнасем" /кĕвви Т.Фанедеевăн/ юрăсенче мĕн чухлĕ савăнăç, хастар кăмăл, çирĕп шанчăк палăрать. Шкул ачисем ку юрăсене юратаççĕ, ушкăнпа тата хорпа та юрлаççĕ. Тепĕр хут çирĕппĕн калар: В. Давыдов-Анатрин пурнăç çутийĕ - юрă. Тулли хаваслăхпа хавхаланса çырнă шкул сăвви-юррисем те унăн творчествине илем кӳреççĕ, аслăлатаççĕ. Акă, "Çамрăклăх илемĕ" юрра илер. Кĕввине Герман Лебедев çырнă. Ку юрăра, поэт поэзийĕнчи евĕр, çирĕп туйăм, юррăн янравлăхĕ мăнаçлăха çирĕплетет, пурнăçа мухтать:

Ĕçре çитĕнетпĕр,
Ĕмĕт малалла.
Сĕршыва пиллетпĕр
Çамрăк вăй-хала.
Сĕршыва савса,
Пурнăçа савса,
Юрă юрлар-и?

Поэт творчествинче Раççей çыннисен шухăш-туйăмне, тăван Чăвашьенре пурăнакансене тата вĕсен ĕçри хастарлăхне сăнарлакан сăвă-юрăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. "Çĕрĕм-шывăм - Чăвашьен" /кĕвви Т.Фандеевăн/, "Тăван Шупашкар" /кĕвви А.Бурундуковăн/, "Сад пахчийĕ чечек сарчĕ", "Хастар çамрăксем, маттур тантăшсем" /кĕвви Г.Лебедевăн/ юрăсенче Тăван çĕршыв, Шупашкар, çамрăклăх сăмахсен ăнлавĕ çӳллĕ шайра чыслă пахалăхпа çыхăннă. Поэтăн юрату темипе çырнă сăввисемпе композиторсем савăнсах ĕçлеççĕ. "Халь кама юрруна парнелен" /кĕвви В.Ильметовăн/, "Кил, савни, лар çумма" /кĕвви Ю.Мясниковăн/, "Савни килсе курман пулсан", "Сăрлă алăк уçăлать" /кĕвви Ю.Кудаковăн/ тата ыт.те çепĕçлĕхĕпе, сăнарлăхĕпе тыткăнлаççĕ.

Поэт хăйĕн сăввисенче пирĕн хушăри йăх-яхсене питлет, ятлать. "Пуш параппан", "Питлет ял-йышăм Çтаппана", "Сухал", "Çитет", "Ан тар, Антун", "Вĕскĕн Иван мухтанать", "Ĕçри мыскара", "Тăрса юлнă çап-çара" тата ыттисене пирĕн пултарулăх коллективĕсенче юрлаççĕ. Анчах та ĕçре, канура, кил-çуртра çакăн пек мыскараçсем пурри В.Давыдов-Анатрие лăплантармасть, тарăхтарать. Аса илер-ха пĕр юррăн сăмахĕсене:

Килчĕ шуçăм шуралса,
Пăхса илчĕ хурланса:
Укçа илнĕ ятпала
Мирун, Микуç, Микула
Сĕр иртгернĕ çырмара,
Тăрсе юлнă çап-çара!
Хе-хе-хе-хе-хе-хе!

Ку сăвăпа Г.Хирбю композитор кулăшла юрă тунă. Поэтпа композитор та çак ӳсĕр сĕрĕмсенчен тăрăхлаççĕ, питлеççĕ вĕсене, кулаççĕ вĕсенчен. Юрăри кĕвĕ сăвăри пекех урăм-сурăм, ăна музыка меслечĕсемпе ăнланулла кăтартнă. Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Александр Александров /1924-1995/ ку юрра ĕнентерӳллĕ юрлатчĕ.

Çак пĕчĕк тĕпчев ĕçĕнче В.Давыдов-Анатри поэтăн пур сăввисемпе хывнă юрăсем çинчен каласа пама май та çук. Поэтпа тăтăшах тĕл пулас тесен, радио, телевидени передачисенче курнăçма пулать, чăваш писателĕсемпе иртгерекен тĕл пулусене хутшăнмалла. Çакна çирĕппĕн каласшăн: поэма е сăвă - поэт чăваш халăхĕн XX ĕмĕрти традицийĕ çине çирĕп тайăнать. Фольклор элеменчĕсемпе тĕрĕс усă курать, тавра курăмне пуянлатать. "Туя туй пек тăвар-и?" юрăпа ташă сюитинче çаксене уйрăмах витерӳллĕн асăрхатăн.

Поэт сăввисемпе пирĕн композиторсем малашне те кĕвĕ хысçăн кĕвĕ хывĕç. Мĕншĕнни паллă: поэтăн кашни сăввийĕ янăравлă. Ун пек чухне композиторсем çапла калаççĕ: сăввисем хăйсемех юрланаççĕ, кашни йĕрки - кĕвĕ, теççĕ. Çапла пултăр та. В.Давыдов-Анатри поэтăн пултарулăхĕ малашне те таса та таравашлă пултăр, иксĕлми хавхаланулăх кӳтĕр чăваш музыкине халăх патне çитерекенсене!

Юрий КУДАКОВ.